25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
СЕНТЯБРЬ,
11
ЭРНЕКУН
212 (6147) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Техникӑллӑ культурӑсемпе ҫӗрулмине вӑхӑтра пухса кӗртер

Техникӑллӑ культурӑсемпе ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫсем халӑх хуҫалӑхӗпе пурнӑҫӗнче мирлӗ вӑхӑтра та питӗ кирлӗ пулнӑ. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вӗсем уйрӑмӑнах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Йӗтӗн-кантӑр, кок-сагыз тата ытти ҫавӑн йышши культурӑсем мӗнле паха чӗртаварсем пулнине кашни колхозникех ӑнланать.

Анчах хӑшпӗр колхозсен руководителӗсем халӗ ҫапларах шухӑшлама пӑхаҫҫӗ: эпир тырпулсене пуҫтарса кӗртес тӗп ӗҫсене вӗҫлесе пыратпӑр, халӗ ӗнтӗ «вак-тӗвексем» юлаҫҫӗ, вӗсене ерипен пуҫтарӑпӑр-ха, — теҫҫӗ вӗсем. Ку вӑл тӗрӗс мар, хытӑрах каласан, сиенлӗ шухӑш.

Техникӑллӑ культурӑсене пухса кӗртесси вӑл — питех те кӑткӑс ӗҫ. Вӑл вӑхӑт та, ӗҫ вӑйӗ те питӗ нумай ыйтать. Йӗтӗн-кантӑра татса типтерлемелле, кок-сапыза пухса илмелле, вӑрлӑхлӑх акнӑ хӗвелҫаврӑнӑшне касса ҫийӗнчех тӗшӗлемелле, курӑк вӑррисене—уйрӑмӑнах клевера ҫулса майлаштармалла, махоркӑна касса типтерлемелле, ҫӗрулми кӑлармалла, ытти пахча-ҫимӗҫсене пуҫтармалла, — ҫапла пӗр вӑхӑтрах пурне те тумалла. Ҫакӑнпа пӗрлех кӗлте те кӳмелле, авӑн та ҫапса пӗтермелле.

Ҫавӑнпа ҫак ӗҫсем ҫине ҫӑмӑллӑн пӑхни е вӗсен умӗнче ҫухалса кайни пӗре те пулмалла мар.

Обществӑллӑ хуҫалӑха йӗркеллӗ тытса пыракан колхоз руководителӗсем, уйхир ӗҫне фронтри пек организацилеме пултаракан ҫынсем, пур тӗрлӗ тырпула та паха вырӑна хурса, колхоз ӗҫне государствӑн вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи интересӗсене пӑхӑнтарса, пурне те тӗплӗн тума ӗлкӗреҫҫӗ. Ҫапла, Ҫӗмӗрле районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Ежов юлташ) кӗрхи тата ҫурхи тырӑсене ҫапса пӗтернӗ. [illegible]

[illegible] Кунти колхозниксем [illegible] пахча-ҫимӗҫсене пуҫтараҫҫӗ. Кун хушшинче колхозниксем 2,5 гектар ҫӗр улми кӑларнӑ. [illegible]

[illegible]

Партипе правительство пире уйрӑм [illegible] техникӑллӑ культурӑсене ҫӗрулмине, ҫавӑн пекех ытти пахча-ҫимӗҫсене [illegible]

Анчах ҫакӑ техникӑллӑ культурӑсене пухса [illegible] колхозсем хӑшпӗр районсенче чылай тупӑнаҫҫӗ. [illegible] «Путь коммунизма» колхоз [illegible] 448 гектар [illegible] (председателӗ Г. Иванов) [illegible] «Красный металлист» колхоз [illegible]

[illegible]

Совет Информаци Бюровӗнчен

Сентябрӗн 9-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Сентябрӗн 9-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ **Сталинградран** хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, ҫавӑн пекех тата **Новороссийск, Моздок** районӗсенче хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сентябрӗн 8-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 40 ҫити танкӗпе бронемашинине, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 200 ҫити автомашинине, горючи тултарнӑ 20 автоцистернине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, полевой тата зенитнӑй артиллерин 8 батарейине пусарса лартнӑ, боеприпассен 3 складне сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн пехотине пӗр полка ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем нимӗҫсен пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсене хирӗҫ хӗрӳллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ. Икӗ кун хушши пынӑ вӑйлӑ ҫапӑҫусем хыҫҫӑн пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан икӗ пунктран тухса кайнӑ. Н-ски стрелковӑй чаҫри гвардеецсем гитлеровецсен темиҫе атакине сире-сире пӑрахнӑ. Нимӗҫсен 10 танкне, 14 орудине тата противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 300 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн танкистсем тӑшманӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине пысӑк сиен кӳреҫҫӗ. Танкӑн Боровков, Пухальский тата Васильев юлташсенчен тӑракан экипажӗ нимӗҫсен танкне, 8 противотанковӑй орудине тата боеприпассем тиенӗ 2 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Беликов юлташ командир пулса ертсе пыракан экипаж нимӗҫсен 2 танкне ҫӗмӗрнӗ, 2 оруди пӗтерсе тӑкнӑ тата гитлеровецсене пӗр взвода ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. Н-ски чаҫри танкистсем пӗр кун хушшинче противникӑнне пурӗ 13 танк ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем противникӑн хаяр атакисене сире-сире пӑрахнӑ. Нимӗҫсен 7 танкне тата пехотине пӗр ротӑна ҫити пӗтернӗ. Н-ски чаҫри танкистсем румынсен пехотин икӗ ротине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Новороссийск районӗнче хаяр ҫапӑҫусем малалла пулса пынӑ. Нимӗҫсем, ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем тӳссе, хулан ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ хӗррине ҫӗмӗрсе кӗнӗ. Пирӗн войскӑсем, контратакӑсем туса, наступлени тӑвакан тӑшмана чарса тӑнӑ. Совет артиллерийӗпе миномечӗсенчен вӑйлӑн персе, противникӑн пехотине икӗ батальона ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫсен ҫунса кайнӑ 5 танкӗ, 8 автомашини тата гитлеровецсен темиҫе ҫӗршер вилли выртса юлнӑ. Пирӗн летчиксем, кӗрешӳре ҫӗр ҫинчи чаҫсемпе ҫыхӑнса тӑрса, тӑшман ҫине штурмласа пыра-пыра тапӑнса тата бомбӑсем пӑрахса, нимӗҫсен танкӗсемпе автомашинисен, ҫапӑҫу пынӑ вырӑна куҫса пыраканскерсен, колоннине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Моздок районӗнче совет войскисем тӑшманӑн юханшывӑн кӑнтӑр ҫыранӗнчи группировкине пӗтерсе тӑкас тӗлӗшпе ҫапӑҫусем туса пынӑ. Пирӗн боецсем пыра-пыра ҫапнипе гитлеровецсен каялла чакма лекнӗ. Н-ски часть нимӗҫсен 3 танкне, 7 орудине тата салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫсен Франц Дитц салтакӗ ҫумӗнче вӑл Ратибор хулинчи темӗнле Шойц патне ҫырнӑ, анчах ярса ӗлкӗреймен ҫырӑва тупнӑ. Ҫав ҫырура ҫапла каланӑ: «Эпӗ ҫулталӑк хушши ӗнтӗ ҫапӑҫатӑп. Эпӗ, юлашкинчен мана тинех канма тиврӗ, тесе шухӑшлаттӑм, анчах юлашки минутӑра пӗтӗмпех улшӑнчӗ. Иккӗмӗш кун ӗнтӗ эпир поездпа фронтӑн ҫӗнӗ участокне каятпӑр. Манӑн ӗнтӗ малти линисем патне, кунсерен нумай юлташсем пӗтнӗ ҫӗре, лекме нимӗнле кӑмӑл та ҫук... Юлашки ҫапӑҫусенче вырӑссем пире мӗнтери хӑрушла ҫухатусем кӳчӗҫ. Эпир кӑҫалхи ҫулла вӑрҫӑ пӗтет тесе шанаттӑмӑр. Шанни ахалех пулчӗ. Вӑрҫӑ кӑҫал пӗтесси ҫинчен шухӑшлама ҫукки уҫӑмлах курӑнса тӑрать. Эпӗ ҫитес хӗл ҫинчен шухӑшласа чӗтрене еретӗп, эпӗ чи пысӑк наградӑсене те, ҫак ҫут тӗнчере пурне те пама хатӗр, манӑн ҫакӑнтан хӑтӑлса тухасчӗ кӑна».

* * *

Нимӗҫсен 100-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен хӑй ирӗкӗпе тыткӑна парӑннӑ. Унтер-офицер Генц Х. ҫапла каласа панӑ: «Киевра эпӗ выҫӑпа шыҫӑнса кайнӑ хӗрарӑмсемпе ачасене куртӑм. Вӗсем ҫӑкӑр шыраса урамсем тӑрӑх ӗмӗлкесем пек ҫӳреҫҫӗ. Нимӗҫсен ҫар влаҫӗсем вырӑссемпе украинецсем ҫине хӑйсен чурисем ҫине пӑхнӑ пек пӑхаҫҫӗ. Эпӗ Киевра чухне унтан украинецсене Германие 5 эшелон ӑсатрӗҫ. Арҫынсемпе хӗрарӑмсене хваттерсенче, урамсенче тытса конвойпа вокзала илсе кайрӗҫ. Хирӗҫ тӑма пӑхакансене тискеррӗн хӗнесе пӗтерчӗҫ. Германие каторгӑри ӗҫе кайма килӗшмен темиҫе украинеца гестаповецсем ҫакса вӗлерчӗҫ».

Сентябрӗн 10-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳрен

Сентябрӗн 10-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ **Сталинградран** хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, ҫавӑн пекех тата **Новороссийск, Моздок** районӗсенче ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сталинградран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем противникӑн танкӗсемпе пехотине хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Н-ски стрелковӑй часть гитлеровецсен темиҫе атакине сирсе пӑрахнӑ тата нимӗҫсен 7 танкне, 200 ҫити автоматчикне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра минометсемпе пулеметсенчен персе, румынсен пехотин атакине сирсе пӑрахнӑ. Румынсен салтакӗсемпе офицерӗсене 350 ҫынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре совет войскисем, наступлени туса пыракан противникӑн атакисене сире-сире пӑрахса, ӑна чылай пысӑк сиен кӳнӗ. Пӗр участокра кӑна нимӗҫсен 8 танкне тата противникӑн пехотине пӗр ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Новороссийск районӗнче пирӗн войскӑсем нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ хӗрӳллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ. Хулан ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ хӗрринче Н-ски соединени боецӗсем пӗр талӑк хушшинче противникӑн 10 атакине сирсе пӑрахнӑ. Нимӗҫсем малтанах пирӗн чаҫсене хӗсме пултарнӑ. Хӑйсен вӑйӗсене пухса йӗркелесе, пирӗн боецсем контратака тунӑ та противника сирсе пӑрахнӑ. Ҫав ҫапӑҫура нимӗҫсен 9 танкне, 4 бронемашинине тата 14 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Гитлеровецсен салтакӗсемпе офицерӗсем 1000 ҫын ытла вилсе пӗтнӗ.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн юханшывӑн кӑнтӑр ҫыранӗнчи группировкине татах пыра-пыра ҫапнӑ. Виҫӗ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче ҫав участокра нимӗҫсен 53 танкне, 3 бронемашинине, 13 автомашинине, 10 орудине тата противникӑн пехотине пӗр полк ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче Н-ски часть нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 300 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн артиллерирен персе тӑшманӑн 6 дзотне, 9 блиндажне, наблюдательнӑй пунктне аркатнӑ, нимӗҫсен 3 танкне ҫӗмӗрнӗ, миномет-сен 5 батарейине тата артиллерин пӗр батарейине пусарса лартнӑ. Мухин юлташ командир пулса тӑракан чаҫри боецсем, пӑшалсемпе пулеметсенчен персе, юлашки кунсенче нимӗҫсен 5 самолетне ӳкернӗ.

* * *

Итальянецсен 54-мӗш пехотнӑй полкӗн 5-мӗш ротинчи пӗрремӗш взводӑн тыткӑна лекнӗ командирӗ лейтенант Роберто Ферреро ҫапла каласа панӑ: «Августӑн 20-мӗшӗнче вырӑссем пирӗн тыла кӗрсе кайрӗҫ. Батальон командирӗн приказӗ тӑрӑх, эпир ҫапӑҫӑва йышӑнмасӑрах каялла чакрӑмӑр. Каялла чакнӑ чухне вырӑссем батальон ҫине вӑйлӑн персе тӑчӗҫ, батальонра 200 ҫынран кая мар пӗтрӗ. Августӑн 21-мӗшӗнче батальона вырӑссем ҫаврӑса илчӗҫ те пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех пӗтерсе тӑкрӗҫ, 30 ҫын кӑна чӗрӗ тӑрса юлчӗ. Ҫав вӑхӑтрах пирӗн полкри 3-мӗш батальон та Я. районне чакрӗ. Ҫав батальон икӗ кун хушшинче 800 ҫын ҫухатнӑ. Ҫапла вара 54-мӗш полк тӗрӗссипе пӗтсе ларчӗ».

* * *

Нимӗҫ захватчикӗсене юрас тесе, Петэнпа Лаваль ушкӑнӗ пӗтӗм вӑйне хурса тӑрӑшать. Берлинран панӑ приказ тӑрӑх Вишири лакейсем, Францири нумай предприятисене хупса, рабочисемпе инженерсене вуншар пин ҫынна урама кӑларса ывӑтнӑ. Французсене выҫӑ аптӑратса ҫитерсе Гитлерӑн тарҫисем вӗсене нимӗҫ каторгине ярасшӑн. Анчах француз рабочийӗсем нимӗҫсен чурисем пуласшӑн мар. Юлашки вӑхӑтра Парижра нимӗҫсен француз рабочийӗсене тара тытас тӗлӗшпе ӗҫлекен тӑватӑ бюроне аркатса тӑкнӑ, нумай вербовщиксене хӗнесе пӗтернӗ. Нантра тата Лионра нимӗҫсен француз рабочийӗсене тара тытас тӗлӗшпе ӗҫлекен бюровӗсем вырнаҫнӑ ҫуртсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Нимӗҫ фальшивомонетчикӗсен ҫӗнӗ элекӗ

Чи малта тӑракан элекҫӗсем пулса, гитлеровецсем пӗтӗм тӗнчере шалӑрчӗҫ. Анчах юлашки вӑхӑтра нимӗҫсем хӑйсем «вӑрҫӑ ҫинчен пӗлтернисенче» ҫавтери ытӑ суйса элекленипе пӑтрашса кайрӗҫ, вӗсем противникӑн ҫухатӑвӗсем ҫинчен мӗнле те пулин цифрӑсене те илсе кӑтартма пӑрахрӗҫ, Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтри ҫапӑҫусенче «пӗтерсе тӑкнӑ» дивизисен хӑйсен пуҫне килсе кӗнӗ номерӗсене кӑна илсе кӑтартаҫҫӗ.

Ҫапла, сӑмахран, сентябрӗн 8-мӗшӗнче нимӗҫ командованийӗ тӗлӗнтерсе яракан пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл пӗтӗм тӗнчене ҫапла пӗлтернӗ: майӑн 1-мӗшӗнчен пуҫласа августӑн 31-мӗшне ҫитиччен нимӗҫсен фашистла войскисем «Хӗрлӗ Ҫарӑн 56 дивизийӗпе 39 бригадине» пӗтерсе тӑкнӑ иккен. Ҫак фантастикӑллӑ даннӑйсене кӑшт та пулин ӗненмеллерех тӑвас тесе, Гитлерӑн штабӗнчи элекҫӗсем Хӗрлӗ Ҫарӑн «пӗтерсе тӑкнӑ» дивизийӗсемпе бригадисен номерӗсене илсе кӑтартаҫҫӗ, анчах ҫакӑн пирки нимӗн тухлӗ те вӑтанмаҫҫӗ: вӗсем илсе кӑтартнӑ дивизисемпе бригадӑсенчен нумайӗшӗ 1942 ҫулти май уйӑхӗнчен пуҫласа август уйӑхне ҫити пулнӑ ҫапӑҫусене пачах та хутшӑнман, вӗсенчен хӑшпӗрисем Действующи Хӗрлӗ Ҫар составӗнче те пулман, ытти дивизисем вара, ҫапӑҫусенче ҫухатусем тӳснӗ пулин те, ҫапах та тӑшмана хирӗҫ халӗ те вӑйлӑн ҫапӑҫаҫҫӗ тата ӑна ҫӗмӗрсе пыраҫҫӗ.

Совет войскисене хут ҫинче пӗтерсе тӑкас задачӑна ҫӑмӑллатас тесе, совет войскисен пулман ҫухатӑвӗсем ҫинчен каласа хӑйсене лӑплантарас тата Германи халӑхне улталас тесе, нимӗҫсем ҫакӑн патнех ҫитсе тӑнӑ: вӗсем совет ҫарӗн ҫӗнӗ войсковой соединенийӗсене — «ударнӑй бригадӑсене» тата «агиаци бригадисене» шухӑшласа кӑларнӑ, ҫакӑн хыҫҫӑн вара нимӗн чухлӗ те вӑй хумасӑрах вӗсене пӗтерсе тӑкнӑ, советӑн пӗтерсе тӑкнӑ чаҫӗсен спискне кӗртнӗ. Ҫав вӑхӑтрах, хӑйсен яланхи жуликла меслетне тытса пырса, гитлеровецсем хӑйсен ҫухатӑвӗсем ҫинчен, вӗсем ҫавтери пысӑк пулин те, каллех пӗр шарламасӑр иртсе кайнӑ.

Ҫапӑҫакан енсем кӑҫалхи майӑн 1-мӗшӗнчен пуҫласа августӑн 1-мӗшне ҫити вӑхӑтра тунӑ ҫухатусем ҫинчен калакан чӑн-чӑн даннӑйсене пичетлесе кӑларатпӑр.

Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтра ҫӳлте асӑннӑ тапхӑрта пулнӑ ҫапӑҫусенче советӑн 42 стрелковӑй дивизийӗ тата 25 бригади, вӗсенчен 14 танковӑй бригадӑпа дивизи, чылай ҫухатусем тӳснӗ.

Ҫав вӑхӑт хушшинчех Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсем тӑшманӑн ҫак 73 дивизине пӗтӗмӗшпех аркатса тӑкнӑ (вӗсен ҫапӑҫури составӗн 70 процентне ытла пӗтерсе тӑкнӑ):

а) нимӗҫсен 1, 6, 8, 11, 22, 24, 28, 50, 57, 58, 62, 75, 79, 87, 102, 113, 123, 132, 161, 168, 170, 223, 227, 256, 269, 290, 291, 294, 297, 305, 336, 342, 377-мӗш тата 387-мӗш пехотнӑй дивизийӗсем; нимӗҫсен 3, 14, 36-мӗш тата 60-мӗш моторизованнӑй дивизийӗсем тата «СС» текен икӗ моторизованнӑй дивизийӗ; нимӗҫсен 4-мӗш тата 5-мӗш горнострелковӑй дивизийӗсем; нимӗҫсен 1, 2, 3, 5, 9, 11, 16, 17, 18, 19, 22-мӗш тата 27-мӗш танковӑй дивизийӗсем. Пӗтӗмпе нимӗҫсен 56 дивизине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ;

б) румынсен 1, 2, 4, 18, 20-мӗш пехотнӑй дивизийӗсем, румынсен 1-мӗшпе 2-мӗш горнӑй дивизийӗсем тата вӗсен кавалерин 5-мӗш дивизийӗ. Пӗтӗмпе румынсен 8 дивизине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ;

в) венгерсен 3, 7, 10, 12-мӗш тата 14-мӗш пехотнӑй дивизийӗсем тата вӗсен танковӑй бригади;

г) Италин 2-мӗшпе 9-мӗш пехотнӑй дивизийӗсем, 3-мӗш моторизованнӑй тата 2-мӗш альпийски дивизийӗсем.

Ҫавӑн пекех тата словаксен 1-мӗш моторизованнӑй дивизине, Данири гитлеровецсен «Дания» ятлӑ легионне пӗтерсе тӑкнӑ.

Кунсӑр пуҫне, майӑн 1-мӗшӗнчен пуҫласа августӑн 31-мӗшне ҫити вӑхӑтра пулнӑ ҫапӑҫусенче совет войскисем нимӗҫсен 26, 30, 44, 56, 76, 94, 95, 121, 122, 129, 208, 212, 254, 258, 296, 299, 328, 329, 340, 384-мӗш тата 385-мӗш пехотнӑй дивизийӗсене йывӑр ҫухатусем кӳнӗ, ҫав дивизисем хӑйсен ҫапӑҫури составӗн 40—50 процентне ҫухатнӑ.

Ҫакӑн пек ӗнтӗ фактсем.

Пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче, ҫапла вара, Хӗрлӗ Ҫар тӑшманӑн войскисен чылай пысӑк пайне ҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Кӑштах вӑхӑт иртӗ, вара Гитлерпа унӑн васалӗсен ытти дивизийӗсене те ҫавӑн пекех мухтавсӑр вилӗм пырса тивӗ. Совет халӑхӗпе Хӗрлӗ Ҫар Совет ҫӗршывне килсе кӗнӗ кашни нимӗҫ, венгер, румын, итальянец, словак, финн валлиех пӗрер пуля тата икшер аршӑн ҫӗр тупса парӗҫ!

СОВИНФОРМБЮРО.

ВКП(б) Тӑвай райкомӗпе ӗҫҫынни депутачӗсен райсовечӗн исполкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, тырпулсене пухса кӗртес ӗҫре пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартнӑшӑн тата пахалӑхлӑ ӗҫленӗшӗн ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

59. **Тӑвай МТС-ӗнчи хӗрарӑмсен трактор бригади** (бригадирӗ **А. П. Порфирьева**). Бригада тракторсемпе ӗҫлемелли ҫулталӑкри плана 103,7 процент тултарнӑ, 1.207,2 гектар сухаланӑ тата 750 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

60. **Тӑвай МТС-ӗнчи тракторсен 4-мӗш бригади** (бригадирӗ **И. Петров**). Августӑн 20-мӗш тӗлне бригада 2.400,2 гектар сухаланӑ, тракторпа тумалли ӗҫсен ҫулталӑкри планне 161,6 процент пурнӑҫа кӗртнӗ, 3.168 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ. Трактористсем Д. Аранов, В. Михайлов, Е. Петрова, П. Петров, Д. Ермолаева, А. Васильева юлташсем фронтри пек ӗҫленӗ.

61. **Тӑвай МТС-ӗнчи тракторсен 12-мӗш бригади** (бригадирӗ **И. Егоров**). Тракторпа тумалли ӗҫсен ҫулталӑкри планне 132,8 процент пурнӑҫа кӗртнӗ. 2.563 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

62. **Константин Антонов** — Тӑвай МТС-ӗнчи комбайнер. Августӑн 20-мӗш тӗлне вӑл «Коммунар» комбайнпа, планпа пӑхнӑ 110 гектар вырӑнне, 121 гектар вырса пуҫтарнӑ.

Район мӗншӗн кая юлнӑ

ОКТЯБРЬСКОЕ, сентябрӗн 9-мӗш. (**«Чӑваш Коммуни» корр., телефонпа**). Районри колхозсем паянхи кун тӗлне пурӗ 100.042 гектар кӗрхи тырӑсем акса хӑварнӑ. Планпа пӑхнӑ тӑрӑх колхозсен тата 448 гектар тырӑ акмалла.

Кӗрхи тырӑсем акас вӑхӑт кунран-кунах иртсе пырать. Кӗрхи акана кая юлса вӗҫлени ҫитес ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илме чылаях чӑрмантарать. Ҫавӑнпа та ыраш акас ӗҫре кая юлнӑ колхозсен ҫак пӗр-икӗ кун хушшинче ака ӗҫне вӗҫлессишӗн ҫине тӑрсах кӗрешмелле. Апла пулин те, ВКП(б) райкомӗн колхозсене кайнӑ представителӗсем колхозсенче ҫителӗклӗ таран ӗҫлемеҫҫӗ, колхозри агитаторсем те колхозниксене тырпула васкавлӑн та пӗр тӑкаксӑр пуҫтарса кӗртес ӗҫре хавхалантарса пымаҫҫӗ, вӗсем хушшинче начар ӗҫлеҫҫӗ.

Районри хӑшпӗр колхозсем кӗрхи тырӑсене акса хӑварас тӗлӗшпе чӑтма ҫук япӑх ӗҫлени колхозсенче ӗҫ вӑйне тӗрӗс тата пӗлсе организацилеменнипе килет. «Новый быт» колхозӑн ҫак кунсенчех 72 гектар, Мишерти «КИМ» колхозӑн 64 гектар, Чӑрӑшкассинчи Киров ячӗпе тӑракан колхозӑн 52 гектар кӗрхи тырӑсем акса хӑвармалла. Анчах та ҫак колхозсен руководителӗсем кӗраки ӗҫне хӑвӑрт вӗҫлессишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ.

Районри 73 колхозран кӗрхи тырӑсем акас плана 43 колхоз ҫеҫ тултарни — район ака ӗҫӗнче питӗ начар ӗҫленине уҫӑмлӑнах ҫирӗплетсе парать.

Караньялӗнчи «Путь коммунизма» колхоз председателӗ Г. Иванов юлташ: «Эпир кӗрхи тырӑсене сентябрӗн 6-мӗшӗнче акса пӗтертӗмӗр», тет. Анчах тӗрӗссипе илсен, колхоз кӗраки планне тултарман. Ку колхозӑн кӑҫал ясмӑк акнӑ вырӑна та кӗрхи тырӑсем акса хӑвармалла пулнӑ. Апла пулин те вӗсем ҫулса пуҫтарма вӑхӑт ҫитнӗ ясмӑка ку таринчченех «симӗс» тата «пулса ҫитмен» тесе ҫулмасӑр тӑнӑ, ҫав вӑхӑтрах кӗрхи тырӑсене те акман.

Ҫакӑн пек колхозсем районра чылай-йӑн шутланаҫҫӗ.

Н. Н.

„Сӗнтӗрпуҫ" колхозри ҫамрӑксем ӗҫре

СЕНТЕРВАРРИ, сентябрӗн 10-мӗш. (**Телефонпа, хамӑр корр.**). «Сӗнтӗрпуҫ» колхозри колхозниксем уйхир ӗҫӗсене васкавлӑн тата пысӑк пахалӑхпа вӗҫлессишӗн ырми-канми, ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Колхозри комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксем тата ватӑ колхозниксем те пурте уйхир ӗҫне хутшӑннӑ. Вӗсем халь кӗлте кӳреҫҫӗ, авӑн ҫапаҫҫӗ, кӗрхи ҫӗртме тӑваҫҫӗ, ҫӗрулми кӑлараҫҫӗ, — колхозри пур ӗҫе те пӗр вӑхӑтра, кар тӑрса тӑваҫҫӗ.

Ҫакна пула та ӗнтӗ колхоз кӗрхи тырӑсене августӑн 30-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех акса пӗтернӗ, ыраша 8 кунта, ҫурхи тырӑсене 12 кунта вырса пуҫтарнӑ. Сентябрӗн 8-мӗшӗ тӗлне 236 гектар ҫинчи кӗлтесене кӳрсе капана хывнӑ, государствӑна обязательство тӑрӑх тырӑ памалли плана пурнӑҫланӑ, Хӗрлӗ Ҫар фондне 62 центнер тырӑ хывнӑ.

Колхоз производствинче ҫамрӑксем питӗ паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. 15—16 ҫулхи ҫамрӑк хӗрачасем С. Степанова, Ю. Краснова, Л. Дубова, Р. Васильева, Р. Федорова, тырӑ вырнӑ вӑхӑтра иквиҫӗ норма тултарса ӗҫленӗскерсем, халӗ авӑн ҫапнӑ тата ытти ӗҫсене тунӑ ҫӗрте те питӗ аван тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Июльпе август уйӑхӗнче вӗсем кашниех 60—85-шер ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ.

Халӗ кӗлтесене уйран турттарас ӗҫе те комсомолецсемпе ҫамрӑксем активлӑн хутшӑннӑ. 16 ҫулхи И. Иванов 3 ҫухрӑмран кунне 11 урапа кӗлте кӳрет. Вӑл икӗ уйӑх хушшинче 61 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Кӗлте кӳрекен хӗрачасем Р. Кузьмина, А. Иванова кашниех уйран итем ҫине 11—12-шер урапа кӗлте турттараҫҫӗ. Иванова юлташ кӑҫал хӑй пӗччен 259 ӗҫкунӗ тунӑ. Икӗ уйӑх хушшинче кӑна вӑл 65 ӗҫкунӗ тунӑ.

Анчах та комсомолӑн «Сӗнтӗрпуҫ» колхозри пуҫламӑш организацийӗн секретарӗ М. Иванов комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксем хушшинче начар ӗҫлет. Вӑл ӗҫе пуҫарса пымасть. Комсомол организацийӗнчи 7 комсомолецран виҫҫӗшӗ комсомол ӗҫӗнчен пачах уйӑрӑлса кайнӑ, член укҫисем тӳлемен. Комсомолецсен пухӑвӗ пулманни те чылай пулать ӗнтӗ. Ҫавӑн пирки колхозра стахановла ӗҫлекен ҫамрӑксене комсомол ретне явӑҫтарас ӗҫ начар.

Комсомол организацийӗнчи чи лайӑх комсомолкӑна А. Федорова юлташа, колхозра ырми-канми ӗҫлесе кӑҫал 200 ӗҫкунӗ ытла ӗҫлесе илнӗскере, колхозниксем колхозра кая юлнӑ бригадӑна ертсе пыма бригадира суйланӑ. Ҫак бригадӑна ертсе пыма нумай вӑй кирлӗ пулнӑ. Анчах та Федорова юлташа комсомол организацийӗ пулӑшу паман. Вӑл ӗҫлеме те, ӗҫе ертсе пыма та пултарать. Ӑна пулӑшмалла.

Н. ПЕТРОВА.

Колхоз государствӑна тырӑ парса татрӗ

ҪӖМӖРЛЕ. (**«Чӑваш Коммуни» корр.**). Тури Кӑмашари «1-ое мая» колхоз ҫурхи тырӑсене вырса пӗтерсе, авӑн ҫапас ӗҫе хӗрӳллӗн тытӑнчӗ. Авӑн ҫапнӑ ҫӗрте колхоза вӑтам шкулта вӗренекенсем вӑйлӑн пулӑшаҫҫӗ. Вӗренекен ачасене учитель Тимофеев юлташ ертсе пырать.

Колхозра ӗҫ вӑйне тӗрӗс вырнаҫтарса тӑратнӑ май, колхоз государствӑна обязательство йӗркипе тырӑ парас плана та тултарчӗ.

Районри чылай колхозсем халӗ авӑн ҫапас, ҫӗрулмипе ытти пахча-ҫимӗҫсене пуҫтарса кӗртес тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ.

Хутарти Ленин ячӗпе тӑракан колхозра сентябрӗн 9-мӗшӗнче 10 гектар, «Большевик» колхозри колхозниксем 7 гектар, «Красноармеец» колхозра 5 гектар ҫӗрулми кӑларнӑ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз ҫӗрулми кӑларса пӗтернӗ.

Хӗрлӗ Ҫар фондне—тырӑ

ЭЛЕК. Пиҫенер ялсоветӗнчи «IX съезд ВЛКСМ» тата Калинин ячӗпе тӑракан колхозсем государствӑна ыраш парса татрӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар фондне валли «IX съезд ВЛКСМ» колхоз 51 центнер, Калинин ячӗпе тӑракан колхоз 60,72 центнер тырӑ пачӗҫ.

М. КУСТИКОВ.

Иранӑн Совет Союзӗнчи посолӗ г. М. Ахи верительнӑй грамотӑсем панӑ

Сентябрӗн 8-мӗшӗнче СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ Иранӑн Совет Союзӗнчи чрезвычайнӑй тата полномочнӑй посолне М. Ахи господина йышӑннӑ, г. М. Ахи хӑйӗн верительнӑй грамотисене панӑ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Ӳкерчĕк çинче: Капитан Кузьмин командир пулса тăракан подразделенийĕ боецĕсем тăшман бомбардировщикне персе ӳкереççĕ. В. ИВАНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Пехотинецсем икĕ „Юнкерса" персе ӳкернĕ

ВОЛХОВ ФРОНЧĔ, сентябрĕн 9-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Артиллери кĕрлесе тăнă вăхăтра самолетсен ушкăнĕ килсе тухнă. Подразделени командирĕ [illegible] боецсене противотанковăй [illegible] самолетсем çине çапăçа тăрлеме приказ панă. [illegible] „Юнкерс—88" йышши бомбардировщиксен ушкăнне курнă. Самолетсем пирĕн оборонăн малти линийĕн çийĕпе вĕçсе иртнĕ.

Вĕсем [illegible] противотанковăй пăшал персе пеме тытăннă. Темиçе хут, харăссăн персе ярсанах пĕр „Юнкерс" тĕтĕм кăларса [illegible]. [illegible] Старши лейтенант Комаров [illegible] „Юнкерс" çине те [illegible] персе ӳкерчĕ.

Гитлеровецсен тискерлĕхĕсем

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, сентябрĕн 8-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Ĕнер тăшман [illegible] ефрейторĕ Карл Гардина фронт линине урлă каçса пирĕн боецсем патне тухнă. [illegible]

Совет боецĕсене тытăнса килсен, [illegible]

[illegible] чах та çакă нимĕç надсмотрщикĕсене парса тăман. Чирле тата выçăпа аптăраса халран кайнă çынсене вĕсем питĕ хытă хĕнетчĕç. Пĕрре эпĕ кам куртăм: нимĕç надсмотрщикĕсем тытăнăри икĕ красноармееца слава туртайманшăн персе вĕлерчĕç.

[illegible] паллăпа паллă туса тухнă. Ытти çуртсене вара нимĕç салтакĕсем ирĕккĕнех кĕме, унта мĕн илес тенĕ çавна илме пултараççĕ. Чăннипе каласан, Пушкин хулинчи халăха тахçанах çаратса пĕтернĕ ĕнтĕ, çынсем унта выçăпа вилеççĕ.

Ăш-какай, сĕт-çу обязательствисене татмалла

КАЛИНИНО. Районри чылай колхозсем государствăна тырпул, ăш-какай тата сĕт-çу памалли обязательствăсене срокчен тултарчĕç. Юманайри «Коминтерн» колхоз 1942 çулти обязательствăсене пурнăçланă хыççăн 1943 çулшăн 1,5 центнер ăш-какай, 462 литр сĕт пачĕ. Çавăн пекех Мичурин ячĕпе тăракан колхоз 1943 çулти обязательствăсен шучĕпе 3 центнера яхăн ăш-какай, 1.406 литр сĕт, «Социализм» колхоз—1,35 центнер ăш-какай, 400 литр сĕт панă. Шĕнерти «Первое мая» колхоз кăçал 7.784 литр сĕт парса, 1942 çулшăн сĕт-çу памалли обязательствăна 205 процент тултарнă.

Анчах «Молния», «КИМ» колхозсем государство умĕнчи парăмсене татассине вăраха тăсса пыраççĕ. «Молния» колхоз ăш-какай обязательствисене 14 процент, сĕт-çу обязательствине 9 процент çеç пурнăçланă. «КИМ» колхоз 1941 çулта памалли обязательствăсен шутĕнчен халĕ те государствăна 829 центнер тырă, 12.381 литр сĕт, 37 центнер ăш-какай, 4.542 çăмарта, 111 килограмм çăм, 92 тир, 55 центнер пахча-çимĕç, 10 центнер кантăр вăрри паман. Колхоз председателĕ С. Пантелеймонов государствăна памалли ялхуçалăх продукчĕсене базарсенче сутса, колхоз производствине хутшăнман «колхозниксене» аванс шучĕпе салатса пĕтернĕ.

Государство умĕнчи парăмсене татас ĕçре чăрмантаракансене тивĕçлĕ ответ тытмалла. Районри «Красноармеец», «Çĕньял», «Хĕрлĕ çăлтăр» колхозсен руководителĕсем те хăйсене Пантелеймонов пек ответ тыттарасса кĕтеççĕ пулас. Вĕсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе питех те начар ĕçлеççĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕçе райуполнаркомзаг та начар ертсе пырать-ха.

Г. МАТВЕЕВ.

Колхозри агитаци ĕçне вăйсăрлатмалла мар

Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра Канаш районĕнчи агитаторсем нумайĕшĕ колхоз производствинче ĕçлерĕç, çавăнпа пĕрлех колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пычĕç. Вĕсем тĕрлĕ ыйтусемпе калаçусем ирттереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăлараççĕ, витринăсенчи хаçатсене улăштарса тăраççĕ, ĕç мĕнле пыни çинчен кăтарту хăмисем çине çырса пыраççĕ.

Колхозсенче 378 агитатор, 169 вулавçă пур. Кунсăр пуçне, район центрĕнчен 19 агитатор ялсене кайнă. Юлашки вăхăтра колхозниксем хушшинче вĕсем «Отечественнăй вăрçă тата колхоз хресченĕсен задачисем», «Нимĕçсен фашистла çарĕ—çынвĕлеренсемпе пусмăрçăсен банди», «1942 çулта тырпулсене çарти пек хăвăрт пухса кĕртер тата государство умĕнчи обязательствăсене тултарар» темăсемпе докладсем туса панă, калаçусем ирттернĕ. Çавăнпа пĕрлех, агитаторсем колхозниксене партипе правительство ялхуçалăх енĕпе йышăннă постановленисене ăнлантарса панă.

Уборка вăхăтĕнче колхоз правленийĕсен председателĕсем лайăх организаторсем тата агитаторсем пулни палăрчĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Тихонов юлташ яланах колхозниксем хушшинче хаçатсем вуласа парать тата калаçусем ирттерет, вĕсене уборкăра хастарлă ĕçлеме хавхалантарса пырать. Ку колхозра жнейкăсем тата комбайн пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕ, çавасемпе усă курнă. Çавасемпе кăна 98 гектар çинчи тырпула çулса пухнă. Çапла вара, колхоз уборкăна ăнăçлăн ирттерчĕ. Доронин ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Кузьмин юлташ, «Воронцовка» колхозăн председателĕ Андрианов юлташ хăйсем жнейкăсемпе тырă вырнă, колхозниксене политикăллă ыйтусене ăнлантарса панă.

Колхозсенче нумайĕшĕнче социализмлă ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан хăмасем, колхозсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсем тунă. Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пуласшăн уйрăм бригадăсем пĕр-пĕрин хушшинче вăйлăн ăмăртаççĕ. Сăмахран, «Красная звезда» колхозра уборкăн малтанхи кунĕсенче тăваттăмĕш бригада Хĕрлĕ ялав илме тивĕçлĕ пулнă. Колхозăн Хĕрлĕ ялавне тăваттăмĕш бригадăна пани çинчен агитаторсем колхозниксене пĕлтернĕ хыççăн, ытти бригадăсем те ăмăртса ĕçлеме пуçланă, çак ăмăртура виççĕмĕш бригада мала тухнă, ăна хĕрлĕ ялав панă. Доронин ячĕпе тăракан колхозра кашни бригада мĕн чухлĕ ĕçлени çинчен кашни кунах кăтарту хăми çине çырса пыраççĕ. Çав хăма çине мĕн çырнине вуласа, кашни колхозникех хăш бригада малта пынине пĕлет, кая юлнисем малта пыракансене çитме тăрăшаççĕ. Кунта стена хаçачĕсене те тăтăшах кăларса тăраççĕ.

Уборка пуçланнăранпа районĕпе колхоз хаçачĕсене 70 номер, бригадăсенчи хаçатсене 350 номер ытла кăларнă. Стена хаçачĕсем çинче стахановецсен ĕç опычĕсене сутатнипе пĕрлех, кахалсене, сӳрĕккĕн ĕçлекенсене хытă критиклеççĕ. Ку вара ĕç дисциплинине çирĕплетме нумай пулăшать.

Уборка вăхăтĕнче куçса çӳрекен библиотекăсем 14 пулнă.

Тырă вырнă вăхăтра колхозсенче агитациллĕ ĕç ăнăçлăн пулса пычĕ. Çавна пула районри колхозсем чылайĕшĕ тырпулсене вăхăтра вырса пĕтерчĕç. Большевикла агитацие малашне тата лайăхрах туса пырас пулать, колхозниксене авăн çапнă, пахча-çимĕç пухса кĕртнĕ, государствăна тырпул панă тата кĕрхи çĕртме тунă çĕрте хастарлă ĕçлеме мобилизацилесе пымалла.

П. СЕРГЕЕВ,
ВКП(б) Канаш райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

ВЛКСМ Обкомĕнче

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче—комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш массăллă воскресникĕ

Чылай районсенчи комсомол организацийĕсем сĕннине ырласа, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ кăçалхи сентябрĕн 13-мĕшĕнче государствăна тырă парас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш массăллă воскресникне ирттерме йышăннă.

ВЛКСМ райкомĕсене тата МТС политотдел начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсене воскреснике тĕплĕн хатĕрленме хушнă: транспорт хатĕрĕсене малтанах хатĕрлемелле, туртăм вăйĕпе ĕç вăйне палăртса хумалла, колхозсенчи тата МТС-семпе совхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксене авăн çапас тĕлĕшпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме мобилизацилемелле, çапла вара государствăна леçсе пама çителĕклĕ чухлех таса тырă хатĕрлесе хумалла.

ВКП(б) Обкомĕ çак мероприятине ырланă тата ВКП(б) райкомĕсемпе МТС политотделĕсен начальникĕсене воскреснике хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе комсомолецсене кирлĕ пулăшăва пама хушнă. Воскресник ирттернĕ чухне колхозсем МТС ĕçĕшĕн натуроплата тӳлемелли плана тултарасси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмалла.

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче шăлан çырли пухмалли воскресник пулать

Шупашкарти шкулсенче вĕренекен ачасем уйхирсемпе вăрмансенче ӳсекен çырласемпе эмел курăкĕсене пухас тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ. Виççĕмĕш номерлĕ шкулта вĕренекен ачасем 1.500 килограмм, пĕрремĕш шкулта вĕренекенсем 1.020 килограмм тĕрлĕрен эмел курăкĕсем пухнă.

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче шăлан çырли пухас тĕлĕшпе республикăра воскресник пулса иртет. Çак воскреснинре шăлан çырлине пухас тĕлĕшпе вĕренекен ачасен ăмăртса ĕçлемелле.

Г. КУЗИНА,
Эмел курăкĕсене пухас тĕлĕшпе ĕçлекен хулари комиссин председателĕ.

—⊙—

Мала тухнă комбинатсем

Нумаях пулмасть Профессиллĕ Союзăн Центральный Комитечĕн Чăваш АССР-ĕнчи организациллĕ бюровĕ, Чăваш республикинчи апат-çимĕç промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕпе пĕрле, районри апат-çимĕç комбиначĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса август уйăхĕнче мĕнле ĕçленин итогне пăхса тухрĕ, социализмлă ăмăртура виçĕ комбинат мала тухнине палăртрĕ.

Шупашкар хулинчи апат-çимĕç комбиначĕ (управляющийĕ Люминарская, местком председателĕ Андреева) плана 146,7 процент, Канаш районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ (управляющийĕ Захватова юлташ, местком председателĕ Тумашик юлташ) плана 139,7 процент, Çĕрпӳ районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ (управляющийĕ Васильева юлташ, местком председателĕ Смирнова юлташ) плана 132,6 процент тултарса ăмăртура мала тухрĕç.

Профессиллĕ Союзăн Центральный Комитечĕн Чăваш АССР-ĕнчи организациллĕ бюровĕпе ЧАССР Апат-çимĕç промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ Кувакино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ çĕнĕ цехсем организацилес тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртрĕç. Шупашкар, Канаш, Çĕрпӳ тата Кувакино районĕсенчи апат-çимĕç комбиначĕсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисене, инженерла-техникла работниксене лайăх ĕçленĕшĕн тав тунă.

Сентябрь уйăхĕнче апат-çимĕç комбиначĕсен татах та лайăх ĕçлесе, Хĕрлĕ Çар валли, çавăн пекех ĕççынисем валли те ытларах продукци парассишĕн кĕрешмелле.

П. КРАСНОВ.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, палатинче Черчилль вăрçă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен каласа панă. Вăл общинăсен палатине Мускавра пулнă чухне хăй тата Гарриман Сталинпа тата Молотовпа нумайччен калаçни çинчен каласа панă. Çав калаçусем вĕсем ăшшăн та туслăн пулса иртрĕç, тенĕ.

Черчилль çапла каланă: вырăссем Англипе Америка Россия тӳсекен йывăрлăха çăмăллатмашкăн çителĕклĕ тунă тесе шутламаççĕ; тăшман хăвăрăн хĕснине, вырăссем питех те пысăк тимлĕхпе чăтса ирттерекенскере, шута илсессĕн — çакăнтан тĕлĕнмелле мар. Вырăссем противника йывăр çухатусем тӳстереççĕ. Вырăссем Англия вĕсене тӳрĕ кăмăлпа пулăшса тăрассине шанма пултараççĕ, тенĕ премьер-министр.

Пирĕн тĕллев, Пĕрлешӳллĕ Штатсен тĕллевĕ пекех, вырăссене нимĕнле çухатусемпе жертвăсене пăхмасăрах тата мĕн май килнĕ таран хăвăртрах пулăшасси пулса тăрать, тенĕ вăл. Мускавра пулнă хыççăн элĕ çакна хытă ĕнентĕм: Совет Российи ĕçе вĕçне çитеричченех çапăçма, гитлеризма пĕтĕмĕшпех аркатса тăкиччченех çапăçма шут тытнă. Европăра ирĕке тухас сехет çитсен (вăл сехет çитетех), çав сехет вăл тавăрмалли сехет те пулса тăрĕ. Гитлерăн усал ĕçĕсене хутшăннисем пурте вара правосуди умне тăрса хăйсене тивĕçлĕ наказани илĕç.

Черчилль малалла çапла каланă: июль уйăхĕнче Рузвельт Англие темиçе мисси ячĕ. Çав миссисен пуçĕнче çаксем пулнă: Америка çарĕсен генеральнăй штабĕн пуçлăхĕ Маршалл, Америкăн тинĕс-çар флочĕн пуçлăхĕ адмирал Кинг тата Рузвельтăн личнăй представителĕ Гопкинс. Вĕсем Лондонра пулнă чухне союзниксем тивĕçлĕ решенисем йышăннă. Çав решенисем пĕтĕм тĕнчипех ĕçсем мĕнле пырассине татса парĕç. Июль уйăхĕн вĕçĕнче Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англия союзниксен малашнехи ĕçĕсем тĕлĕшпе килĕшсе татăлчĕç. Çав решенисене вăрçă ĕçĕсем мĕнле пырас тĕлĕшпе çеç мар, Англипе Америка завочĕсен тухăçлăхĕ тĕлĕшпе те йышăннă. Çав йышăнусемех Черчилле Мускава кайма хистенĕ.

Черчилль çапла каланă: союзниксен войскисен ĕçĕсем Египетра çителĕклĕ лайăх мар тесе шутлама манăн сăлтавсем пулнă. Войскăсен боевой шухăш-кăмăлĕсем лайăх пулнă пулин те, эпир союзниксен войскисен командованийĕнче хăшпĕр улшăнусем тума кирлĕ тесе шутларăмăр, çара çĕнĕ çĕклену тата çĕнĕ лидерсем парас терĕмĕр. Черчилль малалла çапла каланă: Александер генералпа Монтгомери генерал пĕрле хĕвелтухăçĕнче командовани ертсе пымашкăн чи лайăх çынсем пулса тăраççĕ. Окинлек генерал хăйĕн ирĕкĕпе отставкăна тухрĕ; унăн пулăшăвĕпе вăрçă ĕçĕсен çитес тапхăрĕнче усă курма май пулĕ. Вăйсем хушса панине пула 8-мĕш çар хальхи вăхăтра ниххăçанхинчен те вăйлă пулса тăчĕ. Çапăçусем вăхăтĕнче 8-мĕш çартан çĕнĕ çар пулса тăчĕ. Общинăсен палати ак çакна ĕненсе тăма пултарать: 8-мĕш çар вăл темиçе кун, темиçе эрне тытăнса тăма пултарать çеç мар, вăл тата темиçе уйăх хушши ăнăçлăн наступлени туса пыма пултарать. Юлашки эрнере вăрçă ĕçĕсем лайăх пыман тесе калама çук; çакă вăл пурнăçа кĕртнĕ мероприятисем чăнахта вăхăтлă тата кирлĕ пулнине кăтартать.

Черчилль çапла каланă: тинĕс çинчи çухатусем питĕ пысăк-ха, анчах та июльре, августра тата сентябрĕн пĕрремĕш эрнинче ĕç лайăхланчĕ. Суту-илӳ суднисене халь вăрçăра пĕтекен суднăсенчен ытларах тăваççĕ. Çакă вăл Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсем пĕрле тăрăшнипе союзниксен тинĕс çинчи хĕçпăшаллă вăйĕсен ĕçне лайăхлатнине кăтартса парать.

Премьер тата çапла каланă: суднăсене Мальта патне хуралласа пыма питĕ йывăр. Анчах та суднăсен юлашки караванĕ Мальта патне пырса çитни çав йывăрлăхсене çĕнтерме пуррине тата çĕнтерсе пынине кăтартса парать. Каравансене хуралласа пынă çĕрте Англин сывлăшрипе тинĕсри вăйсем пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлени питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хуралласа пырас ĕçе авианосецсем те хутшăнни Англи флочĕн хăватне нумай ӳстерсе ячĕ.

Черчилль Дъепп районне пырса тапăннине йывăр та хаяр тытăçу тесе ят панă. Европа территорийĕнче вăрçă операцийĕсем ӳссе сарălса пынăçемĕн çавăн пек тытăçусем час-часах пулса пырĕç. Çав операци вăл Европа континентĕнче противник çине анлăн наступлени пуçласа ярассине хатĕрлемешкĕн кирлĕ пулнă, тенĕ Черчилль. Противникăн командованийĕ унăн мĕнле вăйсене хирĕç, хăçан тата ăçта çапăçма тивессине пĕлмест.

Июньпе август уйăхĕсенче Англи авиацийĕ Германи çине пĕлтĕрхи çав вăхăт хушшинчен икĕ хут ытларах бомба пăрахнă. Бомбăсем паха объектсене тӳрĕ лекнин проценчĕ ӳснĕ. Çакна палăртмалла: Англи авиацийĕпе пĕрле тата Америка летчикĕсем те хăйсен «Вĕçекен крепость» йышши самолечĕсемпе вĕçеççĕ, çакă вăл сывлăш вăрçă ĕçĕсене сарса ярас тĕлĕшрен çĕнĕ майсем туса парать.

Рузвельт радио тăрăх тухса каланă сăмах

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 8-мĕш, (ТАСС). США президенчĕ Рузвельт радио тăрăх сăмах тухса каланă. Çав сăмахра вăл сентябрĕн 8-мĕшĕнче Конгреса янă хăйĕн воззванине ăнлантарса парать. Воззванире Рузвельт пурнăçăн хакне, вăл шутра ялхуçалăх продукчĕсен хакне те çирĕплетесси çинчен калакан закона ырлама ыйтнă.

Рузвельт таварсен хакне çирĕплетмелли программа çинчен, хăй 1942 çулти апрелĕн 27-мĕшĕнче Конгреса тăратнăскер çинчен аса илтерет. Çав программăна налогсем ӳстерессине, çирĕп хаксем тăвассине, ĕç укçине çирĕплетессине, гражданăсене вăрçă тĕлĕшпе кăларнă облигацисене илме хавхалантарассине, чи кирлĕ таварсемпе тата продуктсемпе усă курмалли нормăсене тăвассине кĕртнĕ.

Çав программăн пĕр пайĕ кăна пурнăçа кĕрсе пырать-ха,—тесе палăртнă Рузвельт. Ана пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртес ĕçре ялхуçалăх продукчĕсен хакĕсем малалла ӳсе пыни тата налог тĕлĕшпе тивĕçлĕ политика çукки чăрмантарса тăрать.

Ялхуçалăх продукчĕсен хакĕсене çирĕплетесси çинчен тата налогсене ӳстересси çинчен панă сĕнӳсене Конгресс ку таринччен те ырламаннине кăтартса парса, Рузвельт çапла каланă: «Çак ĕçе кая хăварса пынине пула, халь ĕнтĕ вăл пĕтĕм экономикăна хăратса тăрать», тенĕ.

Малалла Рузвельт çакна кăтартса панă: пурнăçăн хакне, ку шутра ялхуçалăх продукчĕсен хакне те, çирĕплетме президента ятарласа ирĕк паракан закона конгресран вăл октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр ырлама ыйтнă пулнă. Рузвельт çапла каланă: «Конгресс çак тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем тумасан, эпĕ ответлăха хам çине илсе, тивĕçлĕ ĕçсене хам тĕллĕнех тăвасси çинчен хамăн посланире кăтартса панăччĕ».

Юлашкинчен Рузвельт пĕтĕм тĕнчери вăрçă фрончĕсенчи лару-тăрусем çинче чарăнса тăнă:

«1) Вырăс фрончĕ. Нимĕçсем кунта, Гитлер пĕр çулталăк каярахах яхăн пĕлтернĕ пек, татăклă çĕнтерӳ тума пултараймарĕç. Германия вырăс территорийĕн паха пайне тытса илме пултарчĕ. Апла пулин те, Гитлер вырăссен пĕр армине те пĕтерсе тăкма пултараймарĕ, çакă вăл унăн тĕп тĕллевĕ пулса тăнă тата халĕ те çавăн пекех пулса тăрать. Ĕç çакнашкал килсе тухрĕ: Германин миллионшар салтакĕсем вырăс фронтĕнче татах та тепĕр тискер хĕле тӳссе ирттерес шăпа умĕнче тăраççĕ. Вырăссем нацистсене, противникăн самолечĕсемпе танкĕсене ытти нихăш фронтринчен те ытларах пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Вĕсем хăюллăн кăна мар, çавтери чаплăн çапăçаççĕ. Пур тĕрлĕ ăнăçсăрлăхсем пулнă пулин те, Россия çирĕп тăрĕ тата, юлашкинчен, хăйĕн союзникĕсем пулăшнипе, хăйĕн çĕрĕсем çинчен нацистсене, пĕр çын юлмиччен, пурне те хăваласа ярĕ.

2) Лăпкă океанăн районĕ. Çак район çине тишçĕрпе тинĕсрен тытăнса тăракан пĕр-пĕтĕм район çине пăхнă пек пăхмалла. Эпир Японин пĕр пысăк наступленине чарса лартрăмăр, Японин флотне йывăр çухатусем кӳтĕмĕр. Анчах японецсем халĕ те-ха питĕ вăйлă, вĕсем пуçарулăха хăйсен аллинчех тытса тăма тăрăшаççĕ тата вĕсем, паллах, çĕнĕрен вăйлăн килсе çапма пултараççĕ. Эпир Соломон утравĕсем çинчи вырăнти операцисене пысăк ăсталăхпа туса ирттернине мухтанма пултаратпăр пулин те, пирĕн вĕсене ытлашши ӳстерсе хакламан кирлĕ мар. Çав вăхăтрах эпир Мидуэй утравĕ патĕнче тунă çĕнтерӳ çине те хакламасăр пăхмалла мар. Кунта эпир Японин пысăк наступленине чарса лартрăмăр.

3) Вăтаçĕр тинĕс çинче тата Вăтаçĕр Хĕвелтухăç районĕнче англичансем, Кăнтăрти Африка, Австрали, Çĕнĕ Зеланди, Инди войскисемпе тата пĕрлешнĕ ытти çĕршывсен войскисемпе пĕрле, вăл шутрах пирĕн войскăсемпе пĕрле те, нимĕçсемпе итальянецсене хирĕç хаяррăн çапăçаççĕ. Тĕнĕл держависем, Вăтаçĕр тинĕс çинче, Инди океанĕ çинче пуç пулса тăрас тата Японин тинĕс-çар флочĕпе çыхăну йĕркелес шутпа, çав районра хăйсен контрольне туса хурассишĕн кĕрешеççĕ. Халĕ çапăçу çĕнĕрен хĕрсе кайнă. Пире мĕнле хăрушлăх хăратса тăнине эпир пĕтĕмĕшпех ăнланатпăр, анчах та эпир ĕç ăнăçлăн вĕçленесси çине шанса тăратпăр.

4) Европа районĕ. Кунта пирĕн тĕллев — Германие хирĕç наступлени тăвасси пулса тăрать. Кунта атака тумалли темиçе вуншар тĕрлĕ пункт та пур. Эсир, паллах, эпĕ малашнехи плансем çинчен тĕплĕн каласа парассине кĕтместĕр, анчах эсир çакна çирĕппĕн шанса тăма пултаратăр: çав тĕллеве пурнăçа кĕртес шутпа пирĕн çĕршывра тата Англире хатĕрленӳ пырать. Германин хăватне Европăри çапăçу хирĕсенче çĕмĕрмелле.

Хăшпĕр çынсем пирĕнтен хамăрăн вăйсене çав тăватă районран хăшĕнче те пулин пĕринче пухса тăратма ыйтаççĕ, анчах çав кăтартса панă тăватă районран пĕрине те никам та пăрахса хăварма сĕнекен çук. Паллах, пире никам та Российăна пулăшассине пăрахма, Лăпкă океанăн пĕтĕм районне Японие аллине е Вăтаçĕр тинĕспе Вăтаçĕр Хĕвелтухăçне Германи аллине пама, е Германие хирĕç наступлени тăвассинчен пăрăнма пире никам та çине тăрса сĕнме пултараймасть. Америка халăхĕ çакна шанса тăма пултарать: эпир аслă вăрçăн çав тăватă районĕнчен пĕрине те хакламасăр тăмăпăр. Пурнăçра вăрçă тĕлĕшпе питех те кирлĕ ыйăва йышăнса тăракан хăшпĕр решенисене эпир йышăннă та ĕнтĕ. Вăхăт çитсен, çав решенисем мĕнре пулнине эсир хăвăрах пĕлĕр; çавăн пекех ун çинчен пирĕн противниксем те пĕлĕç. Эпĕ çакна кăна калама пултаратăп: çав решенисене пурне те наступлени пуçласа ярас тĕллевпе йышăннă».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЯДРИНСКИЙ СЕЛЬСКО-ХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ТЕХНИКУМ

продолжает набор учащихся на 1942-43 учебный год.

Техникум готовит агрономов-плодоовощеводов, участковых агрономов-плодоовощеводов, начальников отделений плодоовощных совхозов, агрономов-плодоовощеводов МТС.

Срок обучения в техникуме 3 года.

В техникум принимаются лица в возрасте от 15 до 30 лет, имеющие образование не ниже семилетки.

Прием заявлений производится до 25 сентября 1942 г.

К заявлению прилагаются следующие подлинные документы:

а) свидетельство о рождении,
б) свидетельство об окончании 7-го класса или сдачи экзаменов за 7 классов средней школы,
в) справка о здоровьи,
г) три фотокарточки,
д) паспорт пред'является лично.

Окончившие в 1941 и 1942 г.г. седьмой класс неполной средней школы на „хорошо" и „отлично", 8, 9, 10 классов средней школы, а также лица, демобилизованные из рядов РККА, имеющие подготовку не ниже 7-ми классов, независимо от времени окончания, принимаются без испытаний.

Все остальные поступающие подвергаются приемным испытаниям по Конституции Союза ССР, русскому языку, математике.

Приемные испытания производятся в период с 25 по 30 сентября.

Приемные испытания производятся в об'еме программы неполной средней школы. Испытания по Конституции Союза ССР производятся устно, по остальным предметам устно и письменно (диктант, решение задачи, примеров).

Начало занятий 1-го октября 1942 года.

Плата за обучение 150 рублей вносится в 2 срока (75 руб. к 1 октября и 75 руб. к 1-му февраля.

Дети пенсионеров и мобилизованных в РККА от платы за обучение освобождаются.

Заявления и запросы направлять по адресу:

ЧАССР, гор. ЯДРИН, СЕЛЬХОЗТЕХНИКУМ.

ДИРЕКЦИЯ.

Чебоксарское отделение Военторга МВО
производит прием рабочих
для обучения по специальностям сапожных мастеров, портных и поваров.

Принимаются лица в возрасте 15 лет и старше.
Принятые обеспечиваются зарплатой и обслуживаются столовой.
С предложением обращаться: г. Чебоксары, ул. Ленина, 2.

ТРЕБУЮТСЯ:
главные бухгалтера, ст. бухгалтера, бухгалтер-ревизор, бухгалтера, счетовод-кассир.
Обращаться: г. Чебоксары, ул. Ленина, 64, к главному бухгалтеру. Тел. 2—98.
2—1

Чувашский сельскохозяйственный институт доводит до сведения вновь поступающих студентов, что занятия начинаются 1-го октября, а последний срок приемных испытаний с 20 по 25 сентября.
2—2
Дирекция.

На постоянную работу в Чебоксарах требуются: электромонтеры, слесаря, машинисты, сливо-наливщики, приемо-сдатчики, завхоз — зав. материальным складом, дорожный мастер, шофера, охранники, зав. столовой, повар, буфетчица, инспектор по кадрам, секретарь-машинистка, бухгалтера, табельщик, уборщицы и другие рабочие.
Обращаться по адресу: деревня Аникеево, п/я. №14.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1366 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.